26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1943
ДЕКАБРЬ
28
ЫТЛАРИКУН
256(6493) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Агротехникӑна вӗренессине кашни колхозрах йӗркелер

Пирӗн колхозниксемпе колхозницӑсем кӑҫалхи ялхуҫалӑх ҫулне ӑнӑҫлӑн вӗҫлерӗҫ. Халӗ вӗсем ҫитес ҫуракине тӗплӗн хатӗрленсе, татах та тухӑҫлӑрах тырпул туса илессишӗн кӗрешеҫҫӗ. Ҫак задачӑна пурнӑҫланӑ ҫӗрте чи малтанах колхозсенчи кадрсем — агротехникӑна лайӑх пӗлсе, ӑна тӑтӑшах пурнӑҫласа пыма пултаракан ҫынсем пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ.

Агротехникӑна пӗлекен ҫынсем кашни утӑмрах кирлине асра тытса, Чӑваш АССР Совнаркомӗ ҫак хӗлре колхозсем валли массӑллӑ кадрсем хатӗрлемелли плана ҫирӗплетрӗ. Вӑл план тӑрӑх пирӗн республикӑра ялхуҫалӑхӗнчи тӗрлӗ профессиллӗ работниксем 14 пин ҫын ытла вӗрентсе хатӗрлемелле. Уйхир бригадирӗсем кӑна 2.200 ҫын, тӗштырӑ акса тӑвакан звеноводсем 1.600 ҫын хатӗрлес пулать.

Колхозсенче нумай ҫул хушши хӗрӳллӗн ӗҫлесе пуян опыт пухнӑ колхозниксенчен чылайӗшӗ халӗ Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ фрончӗсенче тискер тӑшмана хирӗҫ ҫапӑҫаҫҫӗ. Ҫак опытлӑ ҫынсем вырӑнне пирӗн ҫӗнӗ кадрсем хатӗрлемелле.

Мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫӗнтерӗвӗсене тӑтӑшах ӳстерсе пыма, Тӑван ҫӗршыва нимӗҫсен фашистла захватчикӗсенчен хӑвӑртрах тасатса ҫитерме пирӗн Тӑван ҫӗршывпа фронт валли тырпул, пахча-ҫимӗҫ, техникӑллӑ чӗртавар, аш-какай тата ытти ялхуҫалӑх продукчӗсем ытларах та ытларах туса памалла. Тухӑҫлӑ тырпул туса илес тесен, выльӑх-чӗрлӗх продуктивноҫне яланах ӳстерсе пырас тесен, вӗсене туса илмелли майсене — агротехникӑна, зоотехникӑна вӗренмелле. Вӗренмелле кӑна мар, унпа практикӑллӑ ӗҫре усӑ курма пӗлмелле.

Халь колхозниксен тӗп масси ялта килес ҫулхи ҫуракине хатӗрленет. Ҫак тапхӑр агротехникӑна вӗренмелли чи паха вӑхӑт пулса тӑрать. Кашни колхозрах агротехника кружокӗсем организацилемелле, ҫав кружоксене колхозниксемпе колхозницӑсен анлӑ массине явӑҫтармалла. Кружоксене ертсе пыма ялти учительсене, агрономсене, зоотехниксене уйӑрмалла.

Республикӑри малта пыракан колхозсем ҫапла тӑваҫҫӗ те ӗнтӗ. Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи «Красная Звезда» колхозра ҫак уйӑхра агротехника кружокӗ ӗҫлеме тытӑннӑ, кружока агроном Гринберг ертсе пырать. Вӗренме колхозниксем нумай ҫӳреҫҫӗ. Калинино районӗнчи Пушкин ячӗпе тӑракан колхозри агрокружокра 60 колхозник ытла вӗренет. Кружока колхоз председателӗ Степанов, ялти учитель Васильев юлташсем ертсе пыраҫҫӗ. Сӗнтӗр районӗнчи «Свобода» колхозри кружокра 45 ҫын, «Смычка» колхозри кружокра—38 ҫын вӗренеҫҫӗ. Вӑл кружоксене участокри агрономсем е агротехниксем ертсе пыраҫҫӗ.

Ытти нумай районсенче те кружоксем ӗҫлеме тытӑннӑ. Анчах та ҫакна каламалла: кружоксем организацилесси пур районсенче те массӑллӑн пулса пымасть-ха. Сӑмахран, Сӗнтӗр районнех илер. Ку районра 101 колхоз, паянхи кун тӗлне вӗсенчен 10-шӗнче кӑна агротехника кружокӗсем ӗҫлеҫҫӗ. Ҫавӑн пекех Сӗнтӗрвӑрри, Елчӗк тата ытти чылай районсенче те агрокружоксем анлӑн ӗҫлеме тытӑнман-ха.

Райҫӗрӗҫ пайӗнче ӗҫлекенсен, партипе комсомол организацийӗсен агротехника кружокӗсене организацилесси ҫине тимлӗн ҫаврӑнса пӑхса, ку ӗҫе халех йӗркелесе ямалла.

Хӗллехи вӗренӗве колхозӑн ертсе пыракан кадрӗсене ҫеҫ мар, пӗтӗм колхозниксемпе колхозницӑсене, подростоксене те хутшӑнтармалла.

Иртнӗ ҫулсенче агротехникӑна вӗренмелли кружоксенче вӑхӑта теориллӗ занятисемпе нумайрах иртгернӗ, ҫынсене куллен тумалли ӗҫе вӗрентесси, лайӑх ӗҫ опычӗсемпе паллаштарасси ҫине ҫителӗксӗр ҫаврӑнса пӑхнӑ. Занятисене ҫавӑн пек иртгерни тӗрӗс меслет мар. Ӗҫе йӑлтах урӑхла туса пымалла, ҫынсене теорипе пӗрле практикӑллӑ ӗҫе те вӗрентмелле. Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи «Красная Звезда» колхозри агротехника кружокӗн руководителӗ Д. Н. Гринберг ӗҫе ҫапла йӗркеленӗ те ӗнтӗ.

Вӗренме пухӑннӑ ҫынсене агрономсем, зоотехниксем, ветеринарсем вӗрентнипе пӗрлех, колхозник-опытниксем, стахановецсем, колхоз руководителӗсем те хӑйсен ӗҫӗнчи опытпа паллаштармалла. Ҫапла вара, теорипе практикӑна сыхӑнтарса пырса вӗрентни кружокра вӗренекенсен пӗлӗвӗсене ҫирӗплетсе хӑварма, вӗсен тавракурӑмне аслӑлатма пулӑшать.

Кашни колхозрах колхозниксемпе колхозницӑсене хӗллехи вӑхӑтра агротехникӑна вӗрентес ӗҫе йӗркелесе ярар. 1944-мӗш ялхуҫалӑх ҫулӗ—пуян тырпуллӑ ҫул пулмалла. Кашни колхоз хӑйӗн уйхирӗнче татах та лайӑхрах ӗҫлесе, ҫӗре кирлӗ шек апат-ҫимӗҫ парса, колхозлӑ уйхиртен мӗн илме пуррине пурне те илме тӑрӑшмалла. Ҫапла тусан вара, пирӗн Хӗрлӗ Ҫарпа Тӑван ҫӗршыв нихӑҫан та тырпул ҫитменнине тата промышленность—чӗртавар ҫитменнине туймӗҫ.

Орелри М. В. Фрунзе ячӗпе тӑракан Ленин орденлӗ Хӗрлӗ Ялавлӑ танковӑй училищӗн начальникне—танковӑй ҫарсен генерал-майорне Вармашкина

Орелри М. В. Фрунзе ячӗпе тӑракан Ленин орденлӗ Хӗрлӗ Ялавлӑ танковӑй училищӗри офицерсен, сержантсен, курсантсен, рядовойсен тата кӗрешсе ӗҫлекен ҫынсен составне ҫав училище 25 ҫул тултарнипе тата ӑна Правительство пысӑк награда панипе саламлатӑп, танковӑй чаҫсем валли офицерсем хатӗрлес ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума сунатӑп

Оборона Халӑх Комиссарӗ Совет Союзӗн Маршалӗ **И. СТАЛИН.**

Киеври М. В. Фрунзе ячӗпе тӑракан Хӗрлӗ Ялавлӑ хӑй тӗллӗн ҫӳрекен артиллерин 2-мӗш училищин начальникне—артиллери генерал-майорне Гундорина

Киеври М. В. Фрунзе ячӗпе тӑракан Хӗрлӗ Ялавлӑ хӑй тӗллӗн ҫӳрекен артиллерин 2-мӗш училищинчи офицерсен, сержантсен, курсантсен, рядовойсен тата кӗрешсе ӗҫлекен ҫынсен составне ҫав училище 25 ҫул тултарнипе тата ӑна Правительство пысӑк награда панипе саламлатӑп, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен артиллери чаҫӗсем валли офицерсем хатӗрлес ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума сунатӑп.

Оборона Халӑх Комиссарӗ Совет Союзӗн Маршалӗ **И. СТАЛИН.**

Орелри М. В. Фрунзе ячӗпе тӑракан Хӗрлӗ Ялавлӑ танковӑй училищӗне наградӑлани

Орелри М. В. Фрунзе ячӗпе тӑракан Хӗрлӗ Ялавлӑ танковӑй училище 25 ҫул тултарнӑ май ӑна Тӑван ҫӗршывшӑн ҫапӑҫса чаплӑ ӗҫсем тунӑшӑн тата танковӑй чаҫсем валли офицерсем вӗрентсе хатӗрлес тӗлӗшпе питӗ пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑшӑн, СССР Верховный Совет Президиумӗн кӑҫалхи декабрӗн 25-мӗшӗнчи Указӗ тӑрӑх, Ленин орденӗпе наградӑланӑ.

Училищӗн командирӗсемпе кӗрешсе ӗҫлекен ҫыннисен ушкӑнне орденсемпе медальсем парса наградӑланӑ. (ТАСС).

Киеври хӑй тӗллӗн ҫӳрекен артиллерин 2-мӗш училищине наградӑлани

Киеври хӑй тӗллӗн ҫӳрекен артиллерин 2-мӗш училищи 25 ҫул тултарнӑ май ӑна Хӗрлӗ Ҫарӑн бронетанковӑй тата механизациленӗ ҫарӗсен хӑй тӗллӗн ҫӳрекен артиллерийӗ валли офицерсем вӗрентсе хатӗрлес тӗлӗшпе тунӑ питӗ чаплӑ ҫитӗнӳсемшӗн тата Тӑван ҫӗршывшӑн ҫапӑҫса паха ӗҫсем тунӑшӑн, СССР Верховный Совет Президиумӗн ҫак ҫулхи декабрӗн 25-мӗшӗнчи Указӗ тӑрӑх, Хӗрлӗ Ялав орденӗпе наградӑланӑ. Училищӗне М. В. Фрунзе ятне панӑ.

Училищӗн командирӗсемпе кӗрешсе ӗҫлекен ҫыннисен ушкӑнне орденсемпе медальсем парса наградӑланӑ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровӗнчен

ДЕКАБРӖН 25-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐ СВОДКА

Декабрӗн 25-мӗшӗнче ВИТЕБСК енче пирӗн ҫарсем ӑнӑҫлӑн малалла тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан 200 пункта ытла тытса илнӗ. Вӗсен шутӗнче — ГРЯДА, СЛОБОДКА, ФИЛЕНКИ, СТАЙКИ, СЛОБОДА, СТЫРИКИ, НОВКА, БУДИСЛОВО, ЗАХОВО, КУРИНО, РЫБАКИ, ПЕНКЛОВИЧИ, МИШУТКИ, БЕНТЯЙ, КОСОВО ятлӑ пысӑк ялсене тата ЗАЛУЧЬЕ ятлӑ чугун ҫул станцине. Пирӗн ҫарсем ВИТЕБСКПА ПОЛОЦК хушшинчи чугун ҫула татса пӑрахнӑ. ЖЛОБИНРАН кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе танкӗсен пур атакисене те сирсе янӑ, тӑшмана ҫынсемпе техника енчен пысӑк ҫухатусем кӳнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведка тунӑ та артиллерипе минометсенчен персе тӑнӑ.

Декабрӗн 24-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 58 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ.

ДЕКАБРӖН 26-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐ СВОДКА

Ҫак кунсенче УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, арми генералӗ ВАТУТИН ертсе пынипе, РАДОМЫШЛЬ хулинчен кӑнтӑртарахра тыткӑна нимӗҫсен фашистла ҫарӗсене хирӗҫ наступлени пуҫласа янӑ, фронта 80 километр сарлакӗш татса, шалалла 40 километр кӗрсе кайнӑ.

Ҫапӑҫусенче ГРЕЧКО генерал-полковникӑн, ЛЕСЕЛИДЗЕ генерал-полковникӑн, МОСКАЛЕНКО генерал-полковникӑн, ЖМАЧЕНКО генерал-лейтенантӑн ҫарӗсем тата артиллери генерал-лейтенанчӗн КОРОЛЬКОВӐН артиллерисчӗсем чапа тухнӑ.

Виҫӗ кун хушши наступлени туса пырса, пирӗн ҫарсем халӑх пурӑнакан 150 пункта ытла ирӗке кӑларнӑ, ҫав шутра—РАДОМЫШЛЬ хулине, Житомир облаҫӗнчи виҫӗ район центрне—БРУСИЛОВА, КОРНИНА, ПОПЕЛЬНЯНА, ҫавӑн пекех тата ҫак пысӑк ялсене: РУДНЯ, ГУТА ЗАБЕЛОЦКА, РАКОВИЧИ, СТАВИЩЕ, АБЕЛОЧЬЕ, КОЧЕРОВО, ВЫСОКОЕ, МЕСТЕЧКО, ВОЙТАШИВКА, ПРИВОРОТЬЕ, ОЗЕРЯНЫ, ОСОВЦЫ, ЛАЗАРЕВКА, ЮЗЕФОКА, ВИЛЬНЯ, КАРАБАЧИН, ДУБРОВКА, ЯСТРЕБЕНЬКА, ВОСТЫЙ, МОРОЗОВКА, ХОМУТЕЦ, ВИЛЬШКА, ЗДВИЖКА, БОЛЯЕВ, ЗАПАДНЯ, СОЛОВЬЕВКА, ДИВИН, ГНИЛЕЦ, ЛИСОВКА, УРБОВКА, ОЗЕРА, ХОДОРКОВ, СОБОЛЕВКА, КОРОЛЕВКА, ЛИКИ, ВЕРБОВ, КОТЛЯРКА, КОЙЛОВКА, МОХНАЧКА ялӗсене тата ВОЛИЦА, КРИВОЕ, СКОЧИЩЕ, ПОПЕЛЬНЯ чугун ҫул станцийӗсене тытса илнӗ.

Ҫапӑҫусенче нимӗҫсен тӑватӑ танковӑй дивизине, ҫав шутра СС «Райх» ятлӑ танковӑй дивизине, тата улттӑ пехотнӑй дивизине аркатса тӑкнӑ.

Нимӗҫсен 159 танкне, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 3 туппине, 52 бронемашинине, тӗрлӗ калибрлӑ 109 туппине пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшман салтакӗсемпе офицерӗсен 15.000 виллитаран выртса юлнӑ.

Малтанлӑха палӑртнӑ тӑрӑх, пирӗн ҫарсем ҫакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: танксем—58, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем—21, бронемашинӑсем—20, тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем—56, миномсем—167, пулеметсем—760, винтовкӑсем—3.000 ытла, боеприпас, хӗҫпӑшал, снаряжени тата апат-ҫимӗҫ склачӗсем—15.

Декабрӗн 26-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем Витебск енче ҫаплах наступлени туса пынӑ, халӑх пурӑнакан 60 пункта ытла йышӑнса илнӗ, ҫав шутра—КАБАК, ШУНЬКИ, НОВАЯ ИГУМЕНЩИНА, ЖЕРЕБИЧИ, ЗАХОД, БЕЛЯНКИ (ВИТЕБСКРАН 20 километр ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре), КАБИЩЕ, ХОМЯКОВО, ЗАДУБРОВКА, ИЛЕНКИ, БЕЛЫНОВИЧИ, ЯСЬКОВА, СТУГРОВА (ВИТЕБСКРА 13 километр хӗвелтухӑҫнерехре), КАЙДУКИ, ВАСЬКОВА, КООПТИ, СВЕРЧКИ, МЯТЛИ, МИСНИКИ ятлӑ ялсене тата КРЫНКИ ятлӑ чугун ҫул станцине.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведка тунӑ тата артиллерипе минометсенчен персе тӑнӑ.

Декабрӗн 25-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 38 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ.

☆ ☆ ☆

Витебск енче пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, халӑх пурӑнакан 60 пункта ытла йышӑнса илнӗ. Витебскран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тӑшман вӑйлӑн персе тӑнӑ, контратакӑсем тунӑ, пирӗн наступлени тӑвакан чаҫсене тытса чарма хӑтланнӑ. Пӗр соединени чаҫӗсем тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ та нимӗҫсен оборонин темиҫе пысӑк опорнӑй пунктне аркатса тӑкнӑ. Витебскран ҫурҫӗртерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ, тӑшман пехотине икӗ батальона ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсенчен 5 танк, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 5 тупӑ, темиҫе артиллери батарейи, боеприпас, склачӗсем тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ. Витебскран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, хаяррӑн ҫапӑҫса, тӑшманӑн вӑйлӑ тӗреклетнӗ оборона тӑрӑхне татнӑ. Нимӗҫсем Лососина шывӗн хӗвеланӑҫ енчи оборона рубежӗнче тытӑнса тӑма хӑтланнӑ. Совет боецӗсем тӑшман хирӗҫ тӑнине сирсе янӑ та, ҫав шыв урлӑ каҫса, унӑн хӗрринче ларакан темиҫе яла тытса илнӗ. Пирӗн ҫарсем тата Крынки ятлӑ чугун ҫул станцине тытса илнӗ. Ҫав районра виҫӗ кун хушшинче 2.000 гитлеровеца ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ, вӗсем хушшинче—58 тупӑ, 15 миномет, 65 пулемет, винтовкӑсем нумай тата боеприпассен 3 склачӗ.

* * *

Белоруссири партизансен темиҫе отрячӗ пӗр кун хушшинче нимӗҫсен фронт патнелле каякан 7 ҫар эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ. Крушенисене пула 6 паровоз, танксемпе тупӑсем тиенӗ 14 платформа, горючи тултарнӑ 7 цистерна тата тӗрлӗ ҫар хатӗрӗсем тиенӗ 21 вагон ҫӗмӗрӗлнӗ. «Фашизма вилӗм» ятлӑ отрядри партизансем, шоссе ҫулӗ ҫине минӑсем лартса, нимӗҫсен 35 автомашинине сирпӗнтерсе янӑ тата 100 гитлеровеца ытла вӗлернӗ.

* * *

Нимӗҫсен 11-мӗш танковӑй дивизийӗнчи 110-мӗш мотополкӑн 7-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ ефрейтор Валентин Рогличек ҫапла каласа панӑ: «1943 ҫулхи октябрь уйӑхӗ-кен эпӗ Францире тӑтӑм. Кӗтмен ҫӗртен мана ытти нумай салтаксемпе пӗрле иршевӑй батальона илчӗҫ те васкаса Российӑна ячӗҫ. Эпӗ 110-мӗш полкӑн 7-мӗш ротине лекрӗм. Унта 110 ҫынччӗ. Темиҫе кун хушши ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн пирӗн ротӑран 80 ҫын вилчӗ е аманчӗ. Полкӑн ытти подразделенийӗсем те ҫавӑн пекех пысӑк ҫухатусем тӳсрӗҫ. Часах лӑпланӗ, анчах та вырӑс снайперӗсем пире канӑҫ памарӗҫ. Вӗсем икӗ кун хушшинче кӑна пирӗн ротӑран 9 ҫынна вӗлерчӗҫ, ҫав шутра рота командирне Ливальд обер-лейтенанта та вӗлерчӗҫ. Ҫакӑн хыҫҫӑн вара пирӗн салтаксем кӑнтӑрла ҫеҫ мар, ҫӗрле те окопсенчен тухма хӑратчӗҫ. Вырӑссем пирӗн позицисене атакӑлама пуҫласан, салтаксем нумайӗшӗ тарса пӗтрӗҫ. Пирӗн отделени Вилли Кретнер унтер-офицерпа пӗрле окопрах юлчӗ. Ӗҫ мӗнле пулса тӑнине сӳтсе-явсан, эпир пурте пире тыткӑна парӑнни ҫеҫ вилӗмрен хӑтарма пултарать тесе шутларӑмӑр. Вырӑссем ҫывхарсан вара эпир пилӗксӗмӗр те окопран тухрӑмӑр та алӑсене тӑратрӑмӑр».

* * *

Аялара нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсем Полесье облаҫӗнчи Храпков ялӗнче тунӑ тискер ӗҫсем ҫинчен ҫырнӑ акта пичетлетпӗр: «Нимӗҫсем пирӗн ялта совет ҫыннисене тискеррӗн мӑшкӑлларӗҫ, асаплантарчӗҫ. Гитлеровецсем 130 ҫамрӑка Германие каторгӑна хӑваласа кайрӗҫ. Нимӗҫсем пирӗн ялти Антон Назаренкӑна, Томаш Фискова тата ытти нумай ҫынна персе вӗлерчӗҫ. Каялла чакас умӗн фашистла ирсӗрсем пирӗн ялти мӗнпур ҫынна площаде пухрӗҫ те персе пӑрахма хатӗрленчӗҫ. Ҫав вӑхӑтра Хӗрлӗ Ҫар разведки ялӑн тепӗр вӗҫне пырса тухнӑ та, гитлеровецсем вара тарчӗҫ. Разведчик-красноармеецсем пире вилӗмрен ҫӑлса хӑварчӗҫ. Хӗрлӗ Ҫарӑн боецӗсене пирӗн яла нимӗҫ захватчикӗсенчен ирӗке кӑларнӑшӑн пысӑк спасибо».

Храпков ялӗнчи ҫынсен пухӑвӗ хушнипе акт ҫине ҫаксем алӑ пуснӑ: П. Марковец, С. Гуща, С. Горженевская, Л. Побединская, А. Короткевич, М. Побединский.

Чӑваш республикинчи колхозсем ҫӗршывпа фронта пулӑшас ӗҫре

И. ЧАРЫКОВ

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн секретарӗ

Сталин юлташӑн Октябрьти социализмлӑ Аслӑ революци 26 ҫул тултарни ҫинчен тунӑ историллӗ доклачӗпе хавхаланса, Чӑваш республикинчи колхозсемпе колхозниксем вунӑ кун хушшинче государствӑна 2,5 миллион пӑт ытла тырӑ сутрӗҫ. Декабрӗн 20-мӗшӗ тӗлне 2 миллион та 250 пин пӑт тырӑ Заготзерно склачӗсене леҫсе панӑ тата 300 пин пӑт потребкоопераци склачӗсене леҫнӗ.

Ҫакӑ вӑл тӑшмана ҫӗнтерес тӗлӗшпе питех те пысӑк ӗҫ туни пулчӗ. Уншӑн колхоз ӗҫхресченӗсем ялхуҫалӑх ҫулӗн тӑршшӗпех ҫине тӑрса, вӑя шеллемесӗр ӗҫлерӗҫ. Ҫуракине кӗске срокра туса иртгернӗ. Чӑваш республикинчи колхозсем тырпулсене уйхиртен ӑнӑҫлӑн пухса кӗртрӗҫ, авӑн ҫапас ӗҫе вара октябрӗн 20-мӗшӗнче — мирлӗ вӑхӑтринчен нумай маларах вӗҫлерӗҫ. Республикӑри темиҫе ҫӗр колхоз кашни гектартан ҫӗршер пӑт тырпул пухса илчӗ. Октябрьти социализмлӑ Аслӑ революци 26 ҫул тултарнӑ тӗле Чӑваш республики государствӑна тырпул пӗтӗмӗшпех парса татрӗ. Кунсӑр пуҫне 1944 ҫулхи нагурсплата шучӗпе тата Хӗрлӗ Ҫар фондне 105 пин пӑт тырӑ парса хунӑ.

Республикӑри выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетекенсем пысӑк та пархатарлӑ ӗҫ туса пыраҫҫӗ. Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне хамӑр алӑрах хӑварассишӗн кӗрешсе, колхоз фермисенчи работниксем выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли государство планне срокчен пурнӑҫа кӗртрӗҫ. Чӑваш республикинчи колхозсем государствӑна аш-какай памалли ҫулталӑкри плана сентябрь уйӑхӗнчех тултарнӑ. Декабрӗн 15-мӗшӗ тӗлне республика государствӑна иртнӗ ҫул ҫак вӑхӑт тӗлне панинчен 212 пин пӑт ытларах аш-какай парса хучӗ. Колхозсем выльӑх-чӗрлӗх витисене хӗле начар мар хатӗрлерӗҫ, ҫителӗклӗ таранах выльӑх апачӗ хатӗрлесе хучӗҫ.

Сталин юлташ колхоз хресченӗсен вӑрҫӑ кунӗсенчи ӗҫне пысӑка хурса хаклани, совет тылӗн мӗнпур вӑйӗсене геройла Хӗрлӗ Ҫара малашне татах та вӑйлӑнрах пулӑшнӑ ҫӗре пама чӗнни орденлӑ Чӑваш республикинчи колхозниксемпе колхозницӑсене патриотла ҫӗнӗ ӗҫсем тума ҫӗклерӗ. Чӑваш республикинчи колхозниксем юратнӑ ҫулҫӑмӑр чӗннине государствӑна массӑллӑн тырӑ сутнипе ответлерӗҫ.

Ку ӗҫе Елчӗк районӗнчи «Марс» колхоз пуҫарчӗ. Ҫак артелӗн колхозникӗсем государствӑна 10 пин пӑт ытла тырӑ сутрӗҫ, колхоз председателӗ коммунист Абдул Гаязов хӑйӗн запасӗнчен 166 пӑт сутрӗ. Гаязов патриотӑн ячӗ Чӑваш республикинчи ӗҫҫыннисене паллӑ ӗнтӗ. Вӑл иртнӗ ҫул Хӗрлӗ Ҫар валли хӗҫпӑшал туянма 105 пин тенкӗ укҫа тата 30 пӑт тырӑ панӑ, ҫавӑншӑн вӑл Сталин юлташран саламлӑ телеграмма илме тивӗҫлӗ пулчӗ.

Малта пыракансен примерӗпе республикӑри ытти колхозсем те государствӑна тырӑ сутма пӗр кӑмӑллӑн йышӑнчӗҫ. Улатӑр районӗнчи «Путь Ильича» колхоз 17.516 пӑт, Шӑхасан районӗнчи «Победа» колхоз 15.000 пӑт, Тӑвай районӗнчи «Красная Чувашия» колхоз 12.175 пӑт, Тӑвай районӗнчи «8-е Марта» колхоз 4.370 пӑт тырӑ сутрӗҫ.

Малта пыракан совет патриочӗсем Гаязов юлташӑн пуҫарӑвне питех те хавасланса йышӑнса илчӗҫ. Йӗпреҫ МТС-ӗн комбайнерӗ Петр Маркиянов тата Комсомольски районри Буденный ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ Иван Краснов хӑйсен запасӗсенчен государствӑна ҫӗршер пӑт, Вӑрнар МТС-ӗн трактористки Елизавета Арсентьева — 150 пӑт сутрӗҫ. Темиҫе пин колхозник хӑйсем перекетлесе усранӑ тырӑран государствӑна сутма 30-шар, 40-шар пӑт е тата ытларах та уйӑрса хучӗҫ. Государствӑна тырӑ сутас ӗҫе республикӑра пӗтӗмпе 107 пин колхозникпе колхозница хутшӑннӑ. Вӗсем ҫӗршыва 600 пин пӑт ытла тырӑ сутнӑ.

Государствӑна сутнӑ 2,5 миллион пӑт тырра хатӗрлев пункчӗсене турттарас ӗҫре республика умне ҫӑмӑл мар задача тухса тӑчӗ. Ана ӑнӑҫлӑн татса парас тесе, колхозсем хӑйсен транспорт бригадисене ҫӗнетсе йӗркелерӗҫ. Малта пыракан ялхуҫалӑх артелӗсем тырӑ турттарас ӗҫре юлса пыракансене пулӑшрӗҫ. Хатӗрлев пункчӗсенче тырра талӑкӗпех йышӑнса тӑмалла турӑмӑр. Сутнӑ тырра турттарас ӗҫе Вӑрнар районӗ пуринчен малтан вӗҫлерӗ. Ку район кӑҫалхи ялхуҫалӑх ҫулне республикӑра пуринчен те ӑнӑҫлӑрах туса пӗтерчӗ. Унти колхозсемпе колхозниксем государствӑна 150 пин пӑт ытла тырӑ сутса, ӑна питех те хӑвӑрт государство склачӗсене турттарса пачӗҫ. Тырӑ турттарас ӗҫе Шупашкар, Шӑхасан, Калинино, Сӗнтӗр тата ытти районсенче те организованнӑ туса ирттерчӗҫ.

Государствӑна тырӑ сутнӑ ҫӗре активлӑн хутшӑнса мала тухнӑ районсене, колхозсемпе колхозниксене республикӑри Хисеп хӑми ҫине кӗртнӗ.

Государствӑна тырӑ сутнӑ колхозсемпе колхозниксене сутма государство потребительсен кооперацине промышленность таварӗсем нумай уйӑрса пачӗ. Таварсене 30 миллион тенкӗлӗх кӳрсе килнӗ те ӗнтӗ, нумай сельпосем ҫав таварсене тырӑ сутнӑ колхозсемпе колхозниксене валеҫсе параҫҫӗ. Государствӑна тырӑ сутнӑшӑн тулакан таварсемпе пирӗн чылай колхозсем ача яслисен нушисене тивӗҫтернӗ ҫӗрте, стахановецсене премиленӗ тата обществӑллӑ ытти нушасене тивӗҫтернӗ ҫӗрте усӑ кураҫҫӗ.

Чӑваш республикинче государствӑна тырӑ сутнипе пӗр вӑхӑтрах ҫӗрулми сутас ӗҫ те пуҫланчӗ. Республикӑри колхозсем государствӑна 180 пин пӑт ытла ҫӗрулми сутнӑ та ӗнтӗ.

Халӗ пирӗн колхозсем хӗрсех вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи виҫҫӗмӗш ҫуракине хатӗрленеҫҫӗ. Вӑрлӑх фондне 90 процент ытларах хывса ҫитерчӗ. Нумай колхозсем уя юр тытса хӑварас, тислӗк тӑкас, удобренисем хатӗрлес ӗҫсене тӑрӑшса тӑваҫҫӗ. Ялхуҫалӑх машинисемпе инвентаре юсаҫҫӗ. Колхозниксене агротехникӑна вӗрентес ӗҫ пуҫланчӗ. Малта пыракан Вӑрнар районӗн пуҫарӑвӗпе республикӑра ҫитес ҫул кашни гектартан ҫӗршер пӑт тырпул туса илессишӗн социализмлӑ ӑмӑрту сарӑлса пырать.

Республикӑри сакӑр машинно-тракторнӑй станци — Йӗпреҫ, Елчӗк, Канаш, Комсомольски, Вӑрнар, Красноармейски, Шупашкар, Шӑхасан МТС-ӗсем — тӑваттӑмӗш кварталта тракторсем юсамалли плана срокчен, ытлашшипех пурнӑҫа кӗртнӗ.

Чӑваш халӑхӗ, аслӑ Октябрь тивлечӗпе пурнӑҫ патне ҫӗкленнӗскер, социализмлӑ обществӑра тулӑх та культурӑллӑ пурӑнма тивӗҫлӗх илнӗскер, тӑван ҫӗршывпа фронтшӑн нимӗн те шеллесе тӑмӗ.

(«Правда», декабрӗн 24-мӗшӗ.)

Днепропетровскри металлурги институтӗнче занятисем пуҫланнӑ

Днепропетровскри металлурги институтӗнче пур курссенче те вӗренме пуҫланӑ. Ҫак институт вӑл Кӑнтӑрти ВТУЗ-сенчен чи пысӑкки пулса тӑрать.

Металлургири тӗп специальноҫсене пӗлекенсене хатӗрленисӗр пуҫне, ҫак институт халь сӑрт-ту рудисен, коксохимически тата ҫунман япаласем тӑвакан промышленноҫсем валли инженерсем хатӗрлет. Мускаври хурҫӑ институчӗпе Уралти индустри институчӗ ҫав ВТУЗ-а вӗренӳ пособийӗсем, лаборатори оборудованийӗсем тата литература парса пулӑшаҫҫӗ. (ТАСС).

РСФСР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖНЧЕ

Крайсенчи, облаҫсенчи, округсенчи, районсенчи, хуласенчи, ялсенчи тата поселоксенчи ӗҫҫынни депутачӗсен совечӗсене суйлассине тепӗр срока хӑварасси ҫинчен

РСФСР Верховный Совечӗн Президиумӗ ҫапла йышӑннӑ:

Крайсенчи, облаҫсенчи, округсенчи, районсенчи, хуласенчи, ялсенчи тата поселоксенчи ӗҫҫынни депутачӗсен совечӗсене суйлассине 1944 ҫулхи декабрь уйӑхӗччен хӑварас тата вӗсен полномочийӗсене ҫав срокчен тӑсас.

Ҫитес ҫураки валли вăрлăх, тракторсемпе ялхуҫалăх машинисем, надрсем хатĕрленĕ ҫĕрте, хĕллехи агротехникăллă мероприятисене пурнăҫа кĕртнĕ ҫĕрте социализмлă ăмăртăва анлăн сарар!

Мастерскойран тухмасăр ĕҫлеççĕ

ЭЛЕК, (Хамăр корр.). Верховнăй Главнокомандующи Сталин юлташăн Октябрь революцийĕ 26 ҫул тултарнă ятпа тунă докладне сӳтсе явнă хыççăн, МТС коллективĕ 1944 ҫула кĕричен 16 трактора юсаса пĕтерме, 1020 тенкĕлĕх машина пайĕсем туса хатĕрлеме тата 3 400 тенкĕлĕх запаслă пайсене реставраци тума обязательство илнĕччĕ.

Ҫак обязательствăна чыслăн пурнăçлассишĕн мастерскойĕнче шăп уйăх сурă хушши хĕрӳллĕ ĕç пычĕ. Чылай рабочисемпе работницăсем темиçе кун хушши мастерскойран тухмасăр ĕҫлерĕç. Тимĕрçĕ Кузнецов юлташ нормăна кулленех 120—150 процент тултарса пычĕ, трактористсем Н. Григорьев, П. Ходаров, Н. Васильев, Т. Васильев юлташсем бригадирсем П. Семенов, И. Филиппов, Н. Васильев, Н. Аполосов юлташсем канма пĕлмесĕр, ир пуçласа каçченех—13—14 сехет хушши гаражран тухмасăр ĕҫлерĕç.

Трактористсемпе трактористкăсем çакăн пек хастаррăн ĕçленине МТС коллективĕ обязательствăна срокчен пурнăçларĕ. МТС IV-мĕш кварталта тракторсене юсамалли графика 10 кун маларах пурнăçларĕ, 16 трактор вырăнне 17 трактор юсарĕ. Кунсăр пуçне вăл плугсем, сеялкăсем, сӳресем юсамалли плана та ытлашшипех тултарчĕ.

Амăртура уйрăмах Аполосов юлташ ертсе пыракан бригада лайăх пример кăтартрĕ. Ку бригадăн IV-мĕш кварталта 2 трактор юсамаллаччĕ, вăл 3 трактор юсарĕ. Ҫапла вара бригада хăйĕн тракторĕсене юсаса пĕтерчĕ, халĕ унăн тепĕр плуг çеç юсамалла. Павлов, Васильев, Семенов юлташсен бригадисем те IV-мĕш кварталта графикăна йĕркеллĕн пурнăçласа пычĕç.

Хĕрарăмсен трактор бригади (бригадирĕ И. Филиппова) хăйĕн сезонри планне пур ĕçсем енĕпе те тултарнă. Трактористкăсем ĕçре те хăйсен организованноçне кăтартаççĕ. План тăрăх бригадăн мĕнпур тракторĕсене февралĕн 5-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтермелле, вăл вĕсене ҫитес 2—3 кун хушшинче юсаса пĕтерет.

Хальхи вăхăтра МТС-ра ĕçлекенсем хушшинче ăмăрту тата анлăн сарăлса кайрĕ. Вĕсем станцинчи мĕнпур тракторсене, кăкарса ĕçлемелли инвентаре хăвăртрах та лайăхрах юсаса пĕтерессишĕн кĕрешеççĕ. Юлашки эрне хушшинче ремонтран тата 2 трактор тухрĕ, чылай запаслă пайсене реставраци тунă. Механик А. Родионов юлташ, хăй шутласа кăларнă сĕнӳ тăрăх, токарнăй станок çинчех тракторсен гильзине тума тытăнчĕ, кĕске вăхăт хушшинчех 17 гильза турĕ. Кунсăр пуçне тата вăл клапан тĕввине те хăех тума пуçларĕ.

Х. ЛИСИН.

Кабинетра ҫуракине хатĕрленеймĕн

КАНАШ, декабрĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри хăшпĕр колхозсем ҫуракине хĕрӳллĕ хатĕрленеççĕ. Вĕсенче вăрлăхсене сортлас, машинăсене юсас тата уя тислĕк кăларас ĕçсем ăнăçлăн пулса пыраççĕ. Доронин ячĕпе тăракан колхоз тĕштырă вăрлăхĕсене йăлтах триерпа сортланă. Пăрçа йышши культурăсен вăрлăхне колхозниксем алăпа суйласа тасатаççĕ. Декабрĕн 25-мĕшĕ тĕлне колхоз вăрлăх хывмалли плана пĕтĕмĕшпех тултарнă. Тĕштырă вăрлăхĕсен шăтас пахалăхне тĕрĕсленĕ. Вăрлăхсен шăтас пахалăхĕ 94—98 процент шутланать.

Паянхи куна колхоз уя 2000 лав ытла тислĕк кăларнă. Вырăнти удобренисем пухаççĕ. Колхоз тимĕрçи Михайлов юлташ плугсене çак кунсенчех юсаса пĕтерет. Вăл лаçра иртен пуçласа каçченех ĕçлет.

Анчах районри колхозсем нумайĕшĕ çак колхоз пек ĕçлемеççĕ-ха. Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ Кондратьев юлташ, малта пыракан колхозсем çине кăтартса:

— Халĕ районри кашни колхозрах хĕрӳллĕ ĕç пырать, пур колхозсем те ҫуракине хатĕрленес енĕпе тимлĕн ĕçлеççĕ,—тесе ответлет.

Ĕç вара пачах урăхла. Районри колхозсем ҫуракине пурте аван хатĕрленеççĕ теме çук. Вăрлăхлăх тырă районĕпе 1.836 центнер ҫитмест. «Первое мая» колхозăн 159 центнер, «Красный путиловец» колхозăн 335 центнер вăрлăх ҫитмест. Ҫавăн пекех Калинин, Ворошилов, Сталин ячĕпе тăракан колхозсен те вăрлăх ҫителĕксĕр. Апла пулин те ку колхозсен руководителĕсем вăрлăх тупма тăрăшмаççĕ-ха.

Кунти колхозсенче тырăсене сортласа тасатас ĕç ӳрĕк-сӳрĕк пулса пырать. Районра 23 триер пур, анчах та вĕсемпе туллин усă курни çук. Паянхи куна пурĕ те 15 триер кăна ĕçлеççĕ, ыттисем усăсăр лараççĕ.

Уйрăм колхозсенче вăрлăхсене сортлас ĕçе ячĕшĕн çеç тунă тĕслĕхсем те пур. Чапаев ячĕпе тăракан колхозра, сăмахран, сортланă тыррăн пахалăхĕ калама çук япăх, ăна пĕтĕмпех тепĕр хут сортламалла.

Колхозсем юр тытса хăварас ĕçе халĕ те пуçăнман. Паянхи кун тĕлне район уя юр тытса хăвармалли плана 4,1 процент кăна пурнăçланă. Уя тислĕк кăлармалли плана та 19 процент çеç тултарнă. Нумай колхозсем вырăнти удобренисене пухас пирки нимĕн те тумаççĕ.

Ялхуçалăх машинисене юсасси те ҫителĕксĕр пулса пырать. 870 плугран пурĕ те 387 плуг кăна юсанă. Сӳресемпе сеялкăсен 40 процентне кăна юсавлă.

Ҫак фактсем район ҫуракине ҫителĕксĕр хатĕрленнине ҫирĕплетсе параççĕ. Анчах райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем. ҫуракине начар хатĕрленекен колхозсене кайса, практикăллă пулăшу парас пирки нимĕн те тумаççĕ-ха.

Ҫуракине хатĕрленес ĕçе кабинетра ларса ертсе пыма çук. Ҫакна Канаш райçĕрĕç пайĕн руководителĕсен халех ăнланса илес пулать.

Ф. МАЛЫШКИН.
(«Чăваш Коммуни» корр.).

Республикăри районсем чугун çул валли вутă хатĕрлемелли 1943-мĕш çулăн икĕмĕш çур çулĕнчи плана декабрĕн 25-мĕшĕ тĕлне мĕн чухлĕ тултарнине кăтартакан СВОДКĂ

Районсем	План тултарнă (процентпа): Туртарас	Хатĕрлес енĕпе
Сĕнтĕрвăрри	1[illegible]	106,1
Шăхасан	1[illegible]	101,1
Йĕпреç	1[illegible]	100,0
Канаш	1[illegible]	98,3
Ишлей	1[illegible]	70,5
Пăрачкав	1[illegible]	68,7
Первомайски	1[illegible]	98,8
Вăрнар	[illegible]	85,3
Шупашкар	[illegible]	77,1
Вăрмар	8[illegible]	91,5
Елчĕк	8[illegible]	67,3
Етĕрне	8[illegible]	69,1
Комсомольски	8[illegible]	61,1
Куславкка	8[illegible]	58,6
Калинино	8[illegible]	86,0
Сĕнтĕр	8[illegible]	59,5
Çĕрпӳ	8[illegible]	84,2
Советски	8[illegible]	63,6
Улатăр	7[illegible]	93,2
Çĕмĕрле	7[illegible]	58,5
Элĕк	7[illegible]	59,7
Октябрьски	6[illegible]	48,7
Шăмăршă	6[illegible]	76,9
Красноармейски	6[illegible]	67,2
Тăвай	5[illegible]	82,3
Хĕрлĕ Чутай	5[illegible]	57,5
Чкаловски	5[illegible]	52,8
Кувакино	4[illegible]	45,0

Тăрăшса ĕçлеççĕ

ЙĔПРЕÇ. Вăрманта ĕçлекенсем ĕç тухăçлăхне куллен ӳстерсе пыма пуçларĕç. Акă, Çĕрпӳ районĕнчи «Новая сила» колхоз членĕ А. Миронова юлташ кунне 5—6 кубометр вутă татать. Çăн пекех Н. Васильева, Ф. Анисимов, Т. Макарова юлташсем те кулленхи заданине икĕ хут ирттерсе тултараççĕ.

И. АЛЕКСЕЕВ.

Планран ирттерсе 2 пин тенкĕлĕх продукци

ЭЛĔК. (Хамăр корр.). «Коммунар» промартель коллективĕ кăçал хăйĕн çулталăкри производство программине пĕр уйăх сурă малтан тултарчĕ. Çавăн хыççăн коллектив, Сталин юлташ фронта ытлараx пулăшса пыма чĕнсе каланине ответлесе, тата тухăçлăрах ĕçлесе пычĕ. Малта пыракан стахановецсем П. Васильева, А. Алексеева, Григорьева тата ытти юлташсем те хăйсен нормисене ялан ирттерсе тултарнипе пĕрлех продукци пахалăхне те чылай лайăхлатрĕç.

Артельри рабочисемпе работницăсем 1944 çула çĕнĕ ҫитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. Ку таранччен вĕсем çулталăкри планран ирттерсе 20 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕç.

Кулленхи ĕçсенчен юлса пыракан хаçат

(«Сталинец»—ВКП(б) Çĕрпӳ райкомĕпе райсовет исполкомĕн хаçачĕ)

Ҫак кунсенче ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ Çĕрпӳ районĕнчи «Сталинец» хаçатăн ĕçĕсем çинчен сӳтсе-явнă. Обком бюровĕ, «Сталинец» хаçат Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче хăйĕн ĕçне лайăхлатнине палăртнипе пĕрлех, хаçатри пысăк çитменлĕхсене те кăтартса пачĕ.

Районсенчи хаçатсен ĕçĕ пысăк мар. Апла пулсан хаçат редакторĕсен, редакцинче ĕçлекенсен ĕçе пĕлсе организацилемелле, хаçатсене кирлĕ те лайăх материалсем çеç пичетлемелле.

Çĕрпӳ районĕнчи «Сталинец» хаçат редакторĕ Егорова юлташ тата редакцинче ĕçлекенсем çавна тивĕçлипе ăнланса илмен пулас. Хаçатра район пурнăçне питех те сахал çутатаççĕ. Хаçат страницисенче ялхалăх тĕрлĕ обязательствăсене тултарса пыраççĕ. Сăмахран, юлашки тăватă уйăх хушшинче тухнă 17 номерте 11 постановлени, 7 сводка тата пĕлтерӳсем нумай тухнă. Ҫапла вара уйăх номерсен, сăмахран, августăн 19-мĕшĕнче, сентябрĕн 9-мĕшĕпе 23-мĕшĕнче тухнă номерсен, хаçат сăн-сăпачĕ те çук, вĕсем бюллетень евĕрлĕ курăнса тăраççĕ.

Пурнăçра те палла постановленисене районри хаçатсем те пичетлеме тивĕçлĕ. Анчах ку кашни номертех постановлени хыççăн постановлени пичетлесе вĕсем çинчен манса каяссине пĕлтермест-ха. Хаçатсенче пичетленĕ постановленисене районри предприятисемпе колхозсенче тата учреждениесенче мĕнле пурнăçа кĕртнине çутатса пырас пулать. «Сталинец» хаçатра çакă курăнмасть. Хаçат кăçалхи июлĕн 2-мĕшĕнче çулйĕр строительстви нче тунă ӳсĕмсемшĕн районсене куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавсем парасси çинчен Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн постановленине пичетленĕ. Çавăн хыççăн вара çулйĕр строительстви çинчен пачах та çырман.

Акă тата тепĕр факт. Ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлес тĕлĕшпе фронтовой уйăхлăх пуçланни çинчен «Сталинец» хаçат сентябрĕн 23-мĕшĕнче тухнă номерте пĕлтернĕ. Уп хыççăнхи сентябрĕн 30-мĕшĕнче, октябрĕн 7-мĕшĕпе 14-мĕшĕнче тухнă номерсенче вара çав ыйтупа мĕн пурĕ те виçĕ заметка çеç пичетленĕ. Октябрĕн 21-мĕшĕнче тухнă номерте фронтовой уйăхлăх çинчен пĕр сăмах та çырман, «Сталинец» хаçат хăйĕн страницисенче фронтовиксен çемьисене пулăшмалли 20 кунлăх çинчен те пачах та асăнман. Чугун çул валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе иртнĕ фронтовой уйăхлăх пирки те пĕр сăмах та шарламан. Мĕн вара Çĕрпӳ районĕнчи колхозсем вăрман хатĕрлевĕнче пачах та ĕçлемен-ши? Тĕрĕс мар. Районри колхозсенчен чылайĕшĕсем вăрманта çине тăрса ĕçлеççĕ. Анчах редакцинче ĕçлекенсем вĕсен ĕçне курмаççĕ.

Хаçатра пичетленсе тухнă материалсен пахалăхĕпе те мухтанма çук. Хаçатра пичетленекен материалсем пурте тенĕ пекех информаци евĕрлĕ. Хаçат час-часах çав-çав производство коллективĕсем, колхозсем, бригадăсем, колхозниксем лайăх ĕçлеççĕ, тесе çырать. Анчах вĕсем мĕнле ĕçлесе мала тухнине уççăн кăтартса вĕрентмест. Хăйсен хаçатне лайăхлатассишĕн тăрăшманни, хăйсен хаçатне юратманни çинчен каласа параççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ хаçат кулленхи ĕçсенчен юлса пырать.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ «Сталинец» хаçат ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе татăклă кăтартусем пачĕ. Хаçат редакторĕн тата редакцинче ĕçлекенсен çав кăтартусене кулленхи ĕçре тимлĕн пурнăçа кĕртсе пымалла. Хаçатра ĕçлекенсен çак çывăх вăхăтра промышленность предприятисемпе колхозсен ĕçĕсем çинчен, партипе комсомол организацийĕсен пурнăçĕ çинчен ытларах çырмалла. Предприятисемпе колхозсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене хăюллăн критикăламалла. Çавăнпа пĕрлех фронтра вăрçă ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен, нимĕç фашисчĕсен тискер ĕçĕсем çинчен ытларах çырмалла. Хамăр землякĕсен, фронтовиксен çырăвĕсене ытларах пичетлес пулать. Хаçатăн кулленхи ĕç программи—Сталин юлташ ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă доклад пулса тăрать.

Хаçат умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырас тесен, корреспондентсемпе лайăхрах ĕçлемелле. Хаçат ĕçне партипе совет тата колхоз активне явăçтармалла. Стена хаçачĕсен редакторĕсене куллен пулăшса тăмалла.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ, Çĕрпӳ райкомĕ хăйĕн хаçатне ҫителĕксĕр ертсе пынине палăртса, ăна малашне хаçат ĕçĕпе ытларах интересленме, куллен ертсе пыма хушса хăварчĕ. ВКП(б) райкомĕ редакцин ĕç планĕсене сӳтсе-явса ҫирĕплетме, хаçатри уйрăм материалсене сӳтсе-явма тата авторсен активне ҫитĕнтермешкĕн пулăшма тивĕçлĕ.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ «Сталинец» хаçата кăтартса панисенчен ытти районсенчи хаçатсен тата ВКП(б) райкомĕсен те хăйсем валли ҫирĕп выводсем тăвас пулать. Районри хаçатсене ĕççыннисене фронта ытларах пулăшассишĕн кĕрешме мобилизацилекен чăн-чăн организаторсем туса хумалла.

Ют çĕршывсенче

ГЕРМАНИН «ШАРНГОРСТ» ЯТЛА ЛИНКОРНЕ ПУТАРНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй çапла пĕлтереççĕ: декабрĕн 26-мĕшĕнче каçхине Нордкап сăмсахĕ патĕнче (Норвеги çурçĕр çырани енче) Германин «Шарнгорст» ятлă линкорне путарнă. Англин тинĕс-çар министерстви «Шарнгорст» линкора путарни çинчен çапла пĕлтерет: «Декабрĕн 26-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен, Англин тинĕс-çар флочĕн Фрейзер адмирал ертсе пыракан карапĕсем, Россиялла кайакан каравана хӳтĕлесе пынăскерсем, Германин «Шарнгорст» линкорне çапăçма тухтарнă. «Шарнгорст» линкора Нордкап сăмсахĕ патĕнче путарнă».

«Шарнгорст» линкор 26 пин тонна таякан карап, ăна 1936 çулта туса пĕтернĕ. Унăн командинче 1461 çын пулнă.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкари çарĕсен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Англин 8-мĕш армийĕн фронтĕнче çапăçусем пыраççĕ. Нимĕçсем вăйлă хирĕç тăрса пулни те, акăлчансем ҫитĕнӳсем тунă. Америкăн 5-мĕш армийĕн фронтĕнче, вăйлă çумăр çуса тăнине пула, нумай районсенче патрульсем çеç хуралласа çӳренĕ. Сăртлă-туллă вырăнсенче çапăçакан çарсем, çанталăк начар тăнине пăхмасăрах, темиçе çӳллĕ вырăна тытса илнĕ.

ЮГОСЛАВИН ХАЛĂХА ИРĔКЕ КĂЛАРАССИШĔН ÇАПĂÇАКАН ÇАРĔН ĔÇĔСЕМ

ЖЕНЕВА, декабрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, халăха ирĕке кăларассишĕн çапăçакан çарăн чăçĕсем Кладань тата Живинице хулисен районĕнче тăшманпа хаяррăн çапăçаççĕ. Германин пĕр дивизийĕ, Кладань хули патнелле çĕмĕрсе тухасшăн пулса, халăха ирĕке кăларассишĕн çапăçакан çарăн чăçĕсене атакăлать.

Ливнопа Дувно секторĕнче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Гитлеровецсем, Купрес тата Бугойно хулисем патне çĕмĕрсе тухас тесе, çĕнĕ вăйсем илсе пыраççĕ. Халăха ирĕке кăларассишĕн çапăçакан çарăн чăçĕсем тăшмана хирĕç çирĕппĕн тăраççĕ, ăна пысăк çухатусем кӳреççĕ.

Халăха ирĕке кăларассишĕн çапăçакан çарăн чăçĕсем Санджакра малалла талăнса пыраççĕ, вĕсем Бродарево хулине йышăнса илнĕ.

Поповачи сывăхĕнче, Загребпа Белград хушшинчи чугун çул çинче, нимĕçсен поездне сирпĕнтерсе янă. Пĕр паровоза тата 5 вагона пĕтерсе тăкнă. Копривница сывăхĕнче чугун çул кĕперне тата 3 километр çурă чугун çул линине çĕмĕрнĕ. Герцеговинăра çапăçакан Югослави çарĕсем Автовада йышăнса илнĕ. Тăшман пысăк çухатусем тӳсет.

АМЕРИКА ÇАРĔСЕМ ÇĔНĔ БРИТАНИ УТРАВĔ ÇИНЕ ПЫРСА АННИ

ЛОНДОН, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: паян Америкăн тинĕс-çар пехоти Глоустер сăмсахĕ çине пырса аннă (Глоустер — Çĕнĕ Британи утравĕн çурçĕр-хĕвеланăç енчи сăмсах).

Чăваш литератури Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче

Ҫак кунсенче Шупашкарта чăваш писателĕсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Писательсен Союзĕ ку пухăва тăван литературăн вăрçă вăхăтĕнчи ҫитĕнĕвĕсене пăхса тухса пĕтĕçтерес шутпа туса ирттерчĕ. Кун йĕркинче «Чăваш халăхĕпе унăн литератури Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче» ятлă доклад пулчĕ.

Докладчик чăваш совет писателĕсен Союзĕн председателĕ А. Эсхель юлташ тăван халăх фронта ĕçлĕн те активлăн пулăшса тăрас тĕлĕшпе тунă пысăк ҫитĕнӳсене палăртрĕ, çав ҫитĕнӳсене тунă çĕрте чăваш писателĕсен творчествăллă ĕçĕ мĕнле вырăн йышăнса тăнине тишкерсе тухрĕ.

Чăваш писателĕсенчен нумайĕшĕсем Отечественнăй аслă вăрçăн малтанхи кунĕсенчех фронта тухса кайрĕç. Вĕсем перопа та, штыкпа та Тăван çĕршыва нимĕç вăрă-хуракĕсенчен хӳтĕлеççĕ. 1941 çулхи кĕркунне, Мускавшăн чи хăрушă вăхăтра, тăван çĕршывшăн пуçне хунă çамрăк партизанка Зоя Космодемьянская çинчен П. Хузангай поэт «Таня» ятлă поэма çырса кăларчĕ, «Аптраман-тавраш» романăн малтанхи сыпăкĕсене тата çĕнĕ сăвăсен сборникне пичетлесе кăларчĕ. «Таня» поэмăна пирĕн вулакансем лайăх пĕлеççĕ ĕнтĕ, çамрăксем пурнăçра Зоя пек çирĕп те шиксĕр пулма, тăван çĕршыва юратма, ăна юлашки юн тумламĕ юлмиччен хӳтĕлеме вĕренеççĕ.

Нумай çыраççĕ вăрçăн малтанхи кунĕсенчех фронта тухса кайнă М. Н. Данилов-Чалдунпа Леонид Агаков писательсем те. Данилов-Чалдун, граждан вăрçи çулĕсенче Çĕпĕрте Колчак бандисене хирĕç партизан пулса çапăçнăскер, Отечественнăй вăрçă фронтне те хăй ирĕкĕпе тухса кайрĕ. Вăл тăшмана хирĕç хĕçпăшалпа тăрса çапăçнă хушăрах çырма та манмасть. Чалдунăн хаçатсенче, «Илемлĕ литература» альманахра час-часах калавсемпе очерксем пичетленсе тухаççĕ. Ҫак кунсенче унăн Чăвашгизра уйрăм кĕнеке тухмалла.

Леонид Агаков вăрçă пуçланнăранпа пысăк повесть тата калавсен сборникĕ пачĕ. Унсăр пуçне вăл «Чăваш Коммуни» хаçатра, альманахра тата фронтри хаçатсенче те çырсах тăрать.

Кĕске калавсен мастерĕ В. Долгов (Хударсем) фронтра хăйĕн темине, хăйĕн геройĕсене тата вĕсене кăтартса памалли хăйне уйрăм çырулăх меслечĕсем, майсем тупрĕ. Унăн юлашки вăхăтсенче çырнă прозăллă сăввисем—чăн та чуна витекен лирикăллă произведенисем. В. Долгов (Хударсем) писатель кăçал «Çурхи калавсем» ятлă кĕнеке пичетлесе кăларчĕ.

К. Пайрашпа И. Тукташ писательсем те тăван литературăпа çыхăну тытсах тăраççĕ. И. Тукташ кĕске калавсемпе прозăллă сăвăсем пачĕ, Державин, Карамзин, Денис Давыдов, Никитин писательсен тăван çĕршыв çинчен çырнă сăввисене куçарчĕ тата Совет Союзĕн Геройĕ П. В. Лаптев çинчен пысăк очерк çырчĕ.

Фронтра чăваш писателĕсем йывăр кунсем тӳссе ирттерчĕç, хăйсен творчествăллă сăн-сăпатне тупрĕç. Ухсай Яккăвĕ пĕр дивизири чăваш боецĕсемпе командирсен ячĕпе тăван халăха сăвăллă çыру ячĕ. Ку вăл çыру кăна мар, пирĕн чаплă аваллăха, унăн улăп пек паттăр çынисене мухтавлакан, паянхи хаяр кĕрешĕве, çапăçу хирĕнчи геройсене кăтартса паракан, çĕнтерӳ патне, çутă малашлăха чĕнекен поэма пулса тăрать. Çавăн пекех поэтăн «Фронтри лирика» цикла кĕрекен сăввисем те—паха произведенисем.

Ытти поэтсем хушшинче Уйăп Мишши творчестви уйрăм вырăн йышăнса тăрать. Вăл пурнăçра пулса иртекен чи хĕрӳллĕ танхăрсемпе ĕçсене çутатса пама тăрăшать. Унăн Сталинград, Украина çинчен çырнă сăввисем, «Салтак амăшĕ» ятлă поэми («Илемлĕ литература», альманахăн 8-мĕш кĕнеки) пĕтĕм халăхăн шухăш-кăмăлне палăртса тăраççĕ.

Пирĕн ватă шăпчăк, чăваш халăх сăвăçи-орденоносец Николай Иванович Шелеби ырми-канми юрлать, сăвă хыççăн сăвă хывать, тăшмансене питлет. Вăрçă кунĕсенче вăл çулпуçне халаласа тата паттăр геройсене мухтаса икĕ кĕнеке кăларчĕ. Хăйĕн ватлăхне пăхмасăр Шелеби юлташ час-часах колхозсемпе заводсенче литература вечерĕсем ирттерет, радио тăрăх тухса калаçать.

Вăхăтсăр çĕре кĕнĕ Ивник поэт вăрçă кунĕсенче йĕрĕнчĕк тăшмана намăс юпи çумне шăталаса хуракан «Ылхан» поэмăн пуçламĕшне çырса хăварчĕ. «Ылханăн» кашни йĕркинчех курайманлăх хăвачĕ тапса тăрать.

Стихван Шавлы поэт юлашки вăхăтра уйрăмах тухăçлă ĕçлерĕ: икĕ сăвă кĕнеки («Йыхрав», «Халăх сасси») пичетлесе кăларчĕ тата вырăс классикĕсене куçарас тĕлĕшпе нумай ĕçлерĕ.

Тылри поэтсенчен Иван Малгай çĕнĕ вăйпа çырма тытăнчĕ.

Пирĕн литературăра Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Н. Орлов капитанăн «Юрататăп эпĕ тăван çĕршыва» тата С. Прокопьевăн «Эскадрон, за мной!» ятлă кĕнекесем уйрăмах паллă вырăн йышăнса тăраççĕ.

Юлашки вăхăтри кĕнекесенчен К. Сергеевăн «Пулеметчик Иван Смирнов» кĕнекине, Хв. Уйрăн «Çулсем-йĕрсем» ятлă сборникне, С. Асланăн «Аслати» повĕçне тата вырăс писателĕсен С. Макаров, В. Станюков, А. Поморский, Л. Закс юлташсен кĕнекисене палăртмалла. Классиксене куçарас тĕлĕшпе Иван Мучи, В. Алагер, К. Турхан, А. Кăлган, Ф. Уяр, К. Чулгаç юлташсем ăнăçлăн ĕçлерĕç.

Пухура тухса калаçакансем (С. В. Эльгер, Н. И. Шелеби, Н. Т. Васянка, С. Шавлы, И. Малгай т. ыт.) А. Эсхелĕн «Амăрткайăк» поэми çинчен чылай чарăнса тăчĕç. «Амăрткайăк» поэма пичетленсе тухни чăваш совет литературинче чылай пысăк событи пулса тăрать. Вăл пирĕн вăхăтри геройăн сăн-сăпатне туллин те анлăн кăтартса парать, чăваш паттăрĕн ятне çĕклекен мухтав юрри пулса тăрать.

Чăваш Халăх поэчĕ С. В. Эльгер, сывлăхĕ япăх пулин те, тăван литературăшăн çине тăрса ĕçлет. Вăл Иван Смирнов герой çинчен поэма çырса пĕтерет.

Булакансене ĕлĕкрех çырнă писательсенчен Н. Васянка, С. Ялавин, Д. Данилов çак хĕрӳ вăхăтра пачах та шарламасăр ларни тĕлĕнтерет.

Тухса калаçакансем драматурги кая юлса пынине, критика ҫителĕксĕррине, тыл çинчен çырнă произведенисем сахаллине палăртрĕç.

Чăваш писателĕсен хамăрăн чаплă геройсен ĕçĕсене кăтартас тĕлĕшпе те çине тăрсах ĕçлемелле-ха. Пирĕн ĕçре хăшпĕр ҫитменлĕхсем, туса ҫитереймен ĕçсем пур пулсан та, чăваш писателĕсем вăрçă пуçланнăранпа самай пысăк ĕçсем турĕç. Халĕ ĕнтĕ пирĕн вуламалăх повĕçсем те, поэмăсем те, калавсем те пур.

Пуху малашне уйрăм писательсен произведенийĕсене тăтăшах сӳтсе-явма, творчествăллă отчетсем туса ирттерме палăртса хăварчĕ.

Ф. АФАНАСЬЕВ.
С. ШУМКОВ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Когизăн Шупашкарти кĕнеке магазинĕ (Хĕрлĕ площадьре) пур гражданисенчен те тата организацисенчен те çак япаласене сутса пама илет: 1) Картинсемпе портретсене (пирĕн çулпуçсен, писательсен, учёнăйсен, геройсен т. ыт. те) 2) скульптурăсене, 3) графикăна, 4) тĕрлĕ япаласен илемлĕ ӳкерчĕкĕсене.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Автоуправление çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: планпа экономика отделĕн начальникĕ, старши бухгалтер, бухгалтер, çавăн пекех тата бухгалтер пулма хатĕрлекен курсра вĕренме учениксем кирлĕ.

Бухгалтерсен курсĕнче вĕренме арçынсене те, хĕрарăмсене те илеççĕ, пĕлӳ тĕлĕшĕнчен вăтам шкултан 10-мĕш класран вĕренсе тухнисенчен кая мар пĕлмелле. Автоуправлени хăй укçипе вĕрентет. Апат-çимĕç парса тăрать тата укçăр пуçне çăкăр карточкипе промтовар карточки парать.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Союзная ул., дом 4, 2-я этаж, Автоуправление. 2—1.

ШОФЕРСЕМ ХАТĔРЛЕКЕН КУРСА ВĔРЕНМЕ ИЛЕÇÇĔ.

Вĕренме 1944-мĕш çулхи январĕн 1-мĕшĕнче пуçламалла.

Мĕн пурĕ 2 уйăх вĕренмелле.

Арçынсене те, хĕрарăмсене те илеççĕ, 17 çултан кĕçĕн пулмалла мар. Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене пуринчен малтан илеççĕ.

Вĕренекенсене стипенди параççĕ тата тăрантараççĕ.

Вĕренме килекен колхозниксен колхозри ĕçрен хăтарни çинчен справка илсе килмелле.

АДРЕС ÇАПЛА: гор. Чебоксары, ул. Калыкова, 19, Автошкола. 3—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99 промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 443 Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.